# Телей сунатăп

***Иван Христофоров кĕвви***

Çĕн кун, сенкер чаршав уçса
Умра йăл кулнăçем,
Кашни çынна куçран пăхса
Савса ал панăçем,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Эп пуç таятăп,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Телей сунатăп.

Хаваслă çил ыраш пуссин
Хуткупăсне калать,
Хĕвелĕн чĕнтĕрлĕ хурси
Уйра уйран услать.
Сире туссем-тăванăмсем,
Эп пуç таятăп,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Телей сунатăп.

Шап-шурă хурăн тăхăнать
Пин ярăмлă кĕпе.
Савнипеле савни утать
Телей сукмакĕпе.
Сире, туссем-тăванăмсем,
Эп пуç таятăп,
Сире, туссем-тăванăмсем,
Телей сунатăп.

*Сементер, Ю. Телей сунатăп: «Çĕн кун, сенкер чаршав уçса…» : [юрă] / Юрий Сементер сăвви ; Иван Христофоров кĕвви // Сементер, Ю. Чăваш пики : юрăсем. – Шупашкар, 2002. – С. 118.*